Ламар

**Атăл**

Йăх-несĕлсем пĕрне-пĕри пĕтернĕ
Вăрçса та харкашса мĕн авалтан.
Çын куçнă шыв-шурпа, çыранпалан,
Çеçенхире пăха-пăха тинкернĕ.
Çĕр чăмăрĕ этем вали ăнтарнă
Лăс курăк та çырла, туллии пучах.
Хĕлле çилсем çĕклеттермен пуçа,
Сукмаксене тăман шăлса пытарнă.
Пăлхар аслашшĕсем çак Атăл урлă
Каçса сиктернĕ йышлă урхамах,
Хула туса хăварнă, - тет юмах, -
Пăлхар хули, ун ячĕ Болгрăд пулнă.
Ун пек хула кунта та пулнă, теççĕ,
Вал тĕлĕкри пек тĕрленет асра.
Чăваш юрри ун тӳсĕмне усрать,
Пинçуллăх кеввисем халь илтĕнеççĕ...
Легенда пĕлтерет: чăваш - пăлхар вăл,
Эпир пĕр халăх пулнă ĕлĕкрен;
Хаваслăх, хурлăх, юрă - пĕр тĕпрен.
Салам сана, Тăван Çĕршывăм - Атăл!

Шупашкар, 16.7.62.

*Туслăх ытамĕ. – Шупашкар, 1985. – С. 133-134.*